**Ӗмӗт**

Вырма пӗлмен ҫурла пӗлӗт ҫинче
Хуйха кайса вӑтанчӗ такамран.
Сарай ҫине шуса пырать мӗлке.
Ӑна эп хам куратӑп кантӑкран.

Унтах авкаланса ҫӑлтӑр сӳнет,
Ӳкет итем ҫине ҫӗленленсе.
Ват пахчари хушра савни йӗрет,
Ахальтенех пӑсать ҫӗмӗрт куҫне.

Кӑшт ҫил пуртан, лере чашлать вӑрман,
Пит тӗттӗмрен мана вӑл курӑнмасть.
Вун ик сехет... савнийӗм ҫывӑрман,
Ытла вӗри чӗри лӑпланаймасть...

Ан йӗр, савни, йӗме вӑхӑт ҫитмен.
Сана — ҫут ир, манман эп, ан хӑра.
Ҫунса тӑран чӗремӗм сӳнмесен
Кашни каҫах юр юрлӑп сан умра.

Ман юрӑсем пулас тӗнче сӑнне
Кӑтартаҫҫӗ юхса ак сывлӑшра,

Сана куҫҫуль тăкан ҫут мĕскĕне

Йăпатаҫҫĕ ишсе ҫĕн пахчара.

Ан йĕр, савни, йĕме вăхăт ҫитмен.

Тăвăл иртет. Унтан эс ан хăра.

Ҫунса тăран ĕмĕтĕм сӳнмесен,

Кашни каҫах юр юрлăп сан умра.

*Рзай, В. Ĕмĕт : [сăвă] // Рзай, В. Ҫырнисен пуххи / В. Рзай. – Шупашкар, 2004. – С. 60.*